25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ОКТЯБРЬ 10 ШАМАТКУН 237 (6178) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Авăн çапас ĕçе хăвăртрах вĕçлер

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту Чăваш республикинчи колхозсем авăн сарăлса пырать. Алтай крайĕнчи патриотсен пуçарăвне, вĕсем пĕтĕм Совет Союзĕнчи колхозсемпе колхозникĕсене Октябрьти социализмлă аслă революци XXV çул тултарнă уява [illegible]

[illegible]

çакна колхозсен руководителĕсем лайăх ăнланса илме тивĕçлĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне авăн çапас ĕçе республикăра 61 процент кăна пурнăçланă. [illegible]

[illegible]

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса хамăр çине илнĕ çĕнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырар! Октябрь уявне пур колхозсенче те авăн çапса пĕтернипе, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илер!

[illegible] колхоз, ялсовет, район руководителĕсем çакна курасçĕ пулсан та, ĕçе лайăх организацилесе вăйлатас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Çапса пуçтарса хуман тырă вăл — пухса кĕмен тырă, кĕтсе илер!

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Н. В. Богданов полковника Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Николай Васильевич **Богданов** полковника **Ленин** орденĕпе **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕ.

Октябрь уявĕ ячĕпе хĕрлĕ обозсем

Срокчен парса татнă

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Октябрьти аслă уява çитĕнӳсемпе кĕтсе илес тесе, районри колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татма тăрăшаççĕ. Ку тĕлĕшпе вĕсем хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ.

Вырăс Улхашри «Лесной огонек» колхозăн (председателĕ комсомолка М. Короткова юлташ) план тăрăх кăçал государствăна 625 центнер тырă памалла, вăл ăна октябрĕн 5-мĕш тĕлнех парса татнă. Колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 44,75 центнер тырă пачĕ.

Обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана Ворошилов ячĕпе тăракан, «1-ое Мая», «Большевик», «Комбайн» колхозсем те ытлашшипех тултарчĕç. «Комбайн» колхоз (председателĕ Яранский) государствăна планран иртτерсе тата 13 центнер ытла тырă панă.

Районри колхозсем государствăна тырă памалли плана çитес вăхăт хушшинчех тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Хĕрлĕ обозсемпе—хатĕрлев пунктне

ИШЛЕЙ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Паян районри чылай колхозсем, государствăна тырă тăратас тĕлĕшпе хĕрлĕ обозсем организацилесе, хатĕрлев пунктне тырă леçме кайрĕç. Мишер ялсоветне кĕрекен колхозсенчен 18 лав, Сыпайкасси ялсовтĕнчен 21 лав, Оточево ялсоветĕнчен 45 лав тырă пама кайнă.

СИДОРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Транспорт бригадисем саланса кайнă

КУСЛАВККА, октябрĕн 8-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Район государствăна тырă тăратас обязательствăна октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне 70 процент ытларах пурнăçларĕ. «Красноармеец», «Правда», «Коммунист», «Трактор», «Красная заря» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем государствăна тырă парса татрĕç, Хĕрлĕ Çар фондне те чылай тырпул пачĕç, натурплата тӳлессине пурнăçларĕç.

Çак вăхăтрах Пăрмасри «Новый путь» (председателĕ К. Симаков), «Ударник» (председателĕ Наумов) колхозсем государствăна халĕ те тырă парса татман. Колхозниксене аванс парас йĕркене пăснă. Государствăна тырă леçме транспорт бригадисем тунă, анчах вăл бригадăсенчи ĕç вăйне урăх çĕрте усă курнă пирки бригадăсем саланса кайнă.

И. ШАРКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче палла улшăнусемех пулман.

Балтика тинĕсĕнче пирĕн карапсем нимĕçсен пĕтĕмпе 12.000 тонна водоизмещениллĕ икĕ транспортне путарнă.

* * *

Октябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкĕпе бронемашинине çити, войскăсем турттарса пыракан 30 автомашинине тата горючи тултарнă 4 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 9 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисемпе хаяррăн çапăçнă. Противникăн пехоти 50 танк пулăшса пынипе пирĕн позицисене хаяррăн атакăланă. Пĕр завод патнелле пымалли вырăнсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пынă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Противника пĕр вырăнта кăна халăх пурăнакан пунктри икĕ урама йышăнма май килнĕ. Кункаçа пирĕн чаçсем нимĕçсен 16 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата нимĕçсен пехотине 4 батальона çити вĕлерсе тăкнă. Гвардеец-минометчиксем тĕл персе 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 18 автомашинăна çунтарса янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине персе тăнă, уйрăм участоксенче гитлеровецсен пĕчĕк ушкăнĕсен атакисене сиресире янă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити, 2 оруди тата 8 пулемет пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата противникăн 11 блиндажне ишĕлтернĕ. Пирĕн боецсем пăшалпа тата пулеметпа персе нимĕçсен 3 самолетне ӳкернĕ. Разведчиксен ушкăнĕ старши лейтенант Панченко ертсе пынипе противникăн окопĕсене çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн пуçланса кайнă тытăçура 20 гитлеровеца чиксе пăрахнă. Снайперсем Оськин, Ахшимов тата Жилин юлташсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна персе вĕлернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сире-сире янă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен салтакĕсене 2 ротăна çити вĕлерсе тăкнă, 2 пулемет, пĕр миномет тата 10 автомашина пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: пĕр бронемашина, 28 пулемет, 46 автомат тата патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Синявино районĕнче противникăн пĕр полкран ытла вăйĕсем танксем пулăшса пынипе пирĕн позицисене кункаçа ултă хутчен пĕр ăнăçусăрах атакăланă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 9 танкне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен темиçе отрячĕ сентябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшĕччен венгерецсен 108-мĕш пехотнăй дивизийĕн 650 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Октябрĕн 4-мĕшĕнче партизансен ушкăнĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен поездне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, салтаксем ларса пынă 4 вагон тата автомашинăсемпе боеприпассем тиенĕ 44 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Венгерецсен 1-мĕш мотобригадин 3-мĕш батальонĕнчи 1-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Андраш Тэп çапла каласа панă: «6 кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн батальон пысăк çухатусем тӳсрĕ. 1-мĕш ротăра 126 çын стройран тухрĕç. Ытти ротăсенче çакăн пекех пысăк çухатусем пулнă. Сентябрьте бригадăна 600 çын çĕнĕрен хушса пачĕç. Анчах та темиçе кун иртсенех вырăс летчикĕсем пирĕн автоколонна çине вĕçсе тухрĕç те салтаксем турттарса пыракан 30 автомашинăна пĕтерсе тăкрĕç. Эрне çитет ĕнтĕ, пире тӳптӳрремĕнех вырăссен пулемечĕсен вутçуламĕ ăшне атакăна кĕртсе ячĕç. Ытла та хăрушă çухатусем пулчĕç... Эпир фронта килнĕ чухнех пире кунта вилĕм кĕтсе тăнине пĕлсе килтĕмĕр».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Белорусс ССР-ĕнчи Полоцк хулинче тунă преступленисем çинчен хыпар илнĕ. Çав хулара гитлеровецсем халăха паспортсене тепĕр хут регистрацилемелле тесе пĕлтернĕ. Вара совет гражданĕсенне нумайĕшинне паспортсене тĕрĕслеме тесе тытса юлнă. Сентябрĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсен комендатури çав граждансен пĕр ушкăнне документсене каялла илме чĕнтернĕ. Комендатурăра нимĕç врачĕсем совет гражданĕсен сывлăхне пăхса тухнă та вĕсен юнне ирĕксĕрлесе нумай юхтарса илнĕ. Çакна палăртнă: юн нумай пĕтнипе çав совет гражданĕсенчен 40 çын ытла вилнĕ.

* * *

Октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче Югослави партизанĕсем Германипе Итали оккупанчĕсен войскисемпе хаяррăн çапăçнă. Доньи—Вакуф çывăхĕнче пулса иртнĕ çапăçусенчен пĕринче партизансем нимĕçсен тата итальянецсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна вĕлерсе тăкнă е амантнă.

Октябрĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕнчи боецсем противникăн тăватă атакине сирсе янă, 2 танк тата нимĕç пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противникăн 12 танкĕ тата çав танксем хыççăн пынă пĕр батальон пехоти пĕр урамăн районне кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем вăйлăн çапăçса нимĕçсен 9 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата гитлеровецсене 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Противникăн чĕрĕ юлнă вăйĕсем хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре уйрăм участоксенче пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Н-ски подразделенин боецĕсем противникăн траншейисене çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн çапăçса нимĕçсен 100 салтакне çити пĕтерсе тăкнă. 4 пулемет, 3 миномет, противотанковăй тупă тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе тăнă. Н-ски соединени боецĕсем виçĕ кун хушшинче гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе тăкнă, 9 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 4 оруди, 13 миномет, 6 автомашина тата боеприпассем тиенĕ 6 лава пĕтерсе тăкнă.

Совет летчикĕсем тăшманăн аэродромне ăнăçлăн тапăннă. «Мессершмитт»-109» йышши 10 самолета, «Юнкерс-52» йышши 2 самолета, «Фокке-Вульф-189» йышши пĕр самолета пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне нимĕçсен 7 самолетне сиенленĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче Васильев юлташ командир пулса тăракан подразделени боецĕсем нимĕç пехотин пĕр батальонĕ тунă атакăна сирсе янă. Çапăçу хирĕнче противникăн 100 салтакĕпе офицерĕ ытла вилсе юлнă. Летчик-штурмовиксем Павленко, Марютин, Васильчиков, Кисиль, Головко, Калинин тата Пономарев юлташсем тăшманăн наступлени тума хатĕрленсе тăнă войскисене ăнăçлăн тапăннă. Нимĕçсем хăйсене тапăнасса кĕтмен, вĕсем чылай пысăк çухатусем тӳснĕ. Пирĕннисем 2 бронемашина тата 20 автомашинăпа лава пĕтерсе тăкнă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен пехоти танксем пулăшса пынипе пирĕн оборона рубежĕсене атакăланă. Гитлеровецсене пăшалсемпе, пулеметсемпе тата минометсемпе персе каялла сирсе янă, гитлеровецсен çапăçу хирĕнче 200 вилене яхăн выртса юлнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче çаксем пур: 8 пулемет, 2 миномет тата нимĕçсен пĕр юсавлă танкĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ сентябрь уйăхĕнче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен 16 поездне ӳпĕнтерсе янă. 16 паровоз стройран тухнă, войскăсем, боеприпассем, горючи тата ытти тĕрлĕ грузсем турттарса пыракан 276 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 223-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 385-мĕш полкран хăйĕн ирĕкĕпе тыткăна парăннă ефрейтор Герман Г. çапла каласа панă: «Эпĕ фронтра уйăх та пурăнаймарăм. Çак кĕске вăхăтра пирĕн полкра питĕ нумай салтакпа офицер пĕтрĕç. Пĕрре пирĕн ротăран 65 çынна вĕлерчĕç, çав куна эпĕ нихăçан та манас çук. Пире тул çутăлнă вăхăтра тăратрĕç те, малалла хăваласа кайса, пеме хушрĕç. Хыçалта обер-лейтенант Мейних кая юлакансене хăваласа пычĕ. Вырăссем наступлени тăвакансене питĕ вăйлăн персе кĕтсе илчĕç. Обер-лейтенант Мейниха вĕлерчĕç. Ытти офицерсем тарчĕç. Вĕсене кура салтаксем те тарчĕç, аманнисене пĕр пулăшусăрах пăрахса хăварчĕç. Эпĕ Доллер салтакпа тата Кляй унтер-офицерпа пĕрле землянкăрах юлтăм; вырăссем пырса çитсен вара эпир тыткăна парăнтăмăр. Эпĕ тыткăна паранасси çакăнтан килчĕ: эпĕ Германи çарĕ çĕнтерессине ĕненместĕп, çак вăрçа эпĕ тĕрĕслĕхлĕ мар вăрçă, çавăнпа та шанчăксăр вăрçă тесе шутлатăп».

* * *

Карели фронтĕнче кĕрешекен Н-ски чаçăн боецĕсен ушкăнĕ тăшманран тытса илнĕ окопра 11 совет боецĕн виллине тупнă, вĕсене белофинсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Красноармеецсем Г. М. Бачинов, В. В. Углов тата И. С. Богданов, аманнăскерсем, тыткăна лекнĕ. Белофинсем вĕсене нумайччен асаплантарнă, кăкăрĕсем çинче пилĕк кĕteслĕ çăлтăрсем касса кăларнă. Асаплантарса вĕлернĕ ытти боецсем камсем иккенне пĕлме май килмен, мĕншĕн тесессĕн вĕсене бандитсем паллаймилле пуличчен суранлатса пĕтернĕ.

* * *

Шарлерура хулинче (Бельгире) Германире тыткăнра тăракан Бельги салтакĕсен арăмĕсем демонстраци тунă. Çав хĕрарăмсем Бельгин наци флагĕсене тата пысăк плакатсем йăтса пынă, çав плакатсем çине çапла çырса хунă: «Пирĕн упăшкасене фашистла тыткăнран таварса парăр!», «Эпир выçă ачасем валли çăкăр ыйтатпăр!» Вырăнти гарнизонри нимĕç салтакĕсене, демонстрантсене салатса яма хăтланнăскерсене, халăх арпаштарса янă. Часах хулана Шатле тата Жильи хулисенчен полици отрячĕсем пырса çитнĕ. Гитлерла ирсĕрсем хĕçпăшалпа усă курма тытăннă. Вилнисемпе аманнисем пур.

Учительсем ăмăртăва хутшăнчĕç

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри учительсем иртнĕ вĕренӳ çулĕнче тăрăшса ĕçленипе пула вĕренӳ пахалăхĕ чылаях лайăхланнă. 24 шкулти 33 класра вĕренекенсем хушшинче япăх отметкăсем илнĕ пирки иккĕмĕш класа юлнисем пулман, 100 процентĕпех малалли классене куçнă. Отличниксем 278, ударниксем 345 пулнă. Ытти çулсенчипе танлаштарсан, иккĕмĕш хут пĕр класа юлнисен хисепĕ те чакнă.

Вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе уйрăмăнах Мăн Улхашри вăтам шкул, Çĕмĕрле ялĕнчи туллимар вăтам шкул тата Ворошиловскипе Кабановски пуçламĕш шкулсем лайăх результатсем панă.

Учительсемпе вĕренекенсем вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ хыççăн колхоз производствинче ĕçленĕ. Вĕсем çăвĕпех ялхуçалăх ĕçĕсене туса пынă: суха тунă, çум çумланă, тырă вырнă, тислĕк тăкнă. Малтанлăха шутланă тăрăх, 1.440 вĕренекен уйхир ĕçĕнче 31.582 ĕçкунĕ тунă. 101 учитель — 3.109 ĕçкунĕ тунă. Вĕсем 2.772 гектар çинчен 10.419 килограмм пучах пухнă. Ку енĕпе уйрăмăнах Хутарти тата Мăн Улхашри вăтам шкул тата Тăванрипе Чăваш Улхашри туллимар вăтам шкулсем лайăх результатсем кăтартрĕç.

Халĕ пур шкулсенче те занятисем пыраççĕ. Учительсемпе вĕренекенсем кăçал вĕренӳре татах та лайăхрах çитĕнӳсем тăвассишĕн, фронта пулăшас ĕçе татах та вăйлатса пырассишĕн кĕрешеççĕ.

Çак кунсенче учительсем Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме Мускаври 455-мĕш шкул коллективĕ чĕнсе каланине сӳтсе-яврĕç. Учительсем пĕр кăмăллă пулса Мускав учителĕсен пуçарăвне ырларĕç, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç. Вĕсем шкулсенче çирĕп йĕрке туса ачасем хушшинчи дисциплинăна нихăçанхи пек мар çирĕплетме, ку енĕпе чăн малтанах хăйсем пример кăтартса пыма, кашни уроках тĕплĕн хатĕрленсе иртерме, çапла вара вĕренӳ пахалăхне çӳлĕ пусăма лартма хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Кусемсĕр пуçне тата учительсем уйрăмах фронтовиксен ачисемпе куллен ĕçлеме, вĕсем валли апат-çимĕç хатĕрлеме, тумлантарма, пур енĕпе те пулăшса пыма, шкулсенчи ремонт ĕçĕсене хăйсен вăйĕпех (государство укçине расходламасăр) туса пыма, ачасене вĕрентес ăсталăха ӳстерсе пыма пулчĕç.

Х. ЛИСИН.

Октябрь уявĕ умĕн социализмлă ăмăрту

Çулталăкри плана иртτерсе тултарнă

КАНАШ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Канашри типографи (директорĕ Д. Бык юлташ, местком председателĕ А. Егорова юлташ). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăкри производство планне **122** процент ытла тултарчĕ.

Типографи коллективĕ сентябрь уйăхĕнче те планран иртτерсе нумай продукци кăларчĕ. Çапла вара 1942-мĕш çулăн 9 уйăхĕ хушшинче типографи планран иртτерсе 8.027 тенкĕлĕх продукци кăларнă.

Рабочисемпе работницăсем çулталăк вĕçленнĕ тĕле татах 3 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма тăрăшса ĕçлеççĕ.

Наборнăй цехра ĕçлекенсем (цех начальникĕ Е. Боровский юлташ) О. Кучерова, Н. Николаева, А. Лапин юлташсем сентябрь уйăхĕнчи ĕç планне чылай иртτерсе тултарнă. Çавăн пекех пичетлекен цехри (цех начальникĕ В. Морозов юлташ) А. Егорова, О. Васильева, Константинова юлташсем те ĕç нормине 130—150 процент тултарса ĕçлеççĕ

П. НИКОЛАЕВ.

ЗАВОДРИ ХИСЕП КĔНЕКИ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри пур цехсем те сентябрь уйăх планне тултарчĕç, август уйăхĕпе танлаштарсан, завод заданирен иртτерсе **22** процент продукци кăларнă.

Сентябрь уйăхĕнче уйрăмăнах Соколовский юлташ начальник пулса ĕçлекен цех задание 120 процент, Егорушкин юлташăн Хĕрлĕ ялавлă смени **130** процент тултарчĕç.

Сентябрь уйăхĕнчи ĕçсен итогне палăртнă хыççăн, заводри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава вагонсем юсакан цеха (начальникĕ Коломиец юлташ) панă. Ку цехри рабочисем хăйсен нормисене кашниех 222 процент чухлĕ тултарса ĕçленĕ.

Сменăсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Егорушкин сменине, бригадăсенчи ялава Чесов юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригадине панă.

Халĕ заводра лайăх стахановецсен хисеп кĕнекине тунă. Çак кĕнеке çине производствăра лайăх палăрнă стахановецсене, бригадирсене, мастерсене кĕртеççĕ.

СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Уяв парнисем хатĕрлеççĕ

ЙĔПРЕÇ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районра Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне уяв парнисем ярса парас ĕç сарăлсах пырать. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем боецсем валли пурĕ 105 килограмм какай, 12 килограмм шăратнă çу, 35 килограмм услам çу, 11 хур, 17 автан хатĕрленĕ.

Боецсем валли парнесем хатĕрлес тĕлĕшпе Буденный ячĕпе тăракан тата «Коминтерн», «Костер» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. «Коминтерн» колхоз членĕсем боецсем патне 7 [illegible], 10 хур, 3 центнер тулă çăнăхĕ ярса параççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

ЧĂВАШСЕН АКАДЕМИЛЛĔ ТЕАТРĔН 1942—43 ÇУЛСЕНЧИ СЕЗОНĔ УÇĂЛЧĔ

Октябрĕн 8-мĕшĕнче Чăвашсен Академиллĕ театрĕн 1942—43 çулсенчи сезонĕ уçăлчĕ. Сезона театрăн чăваш труппи Мдивани çырнă «Приказ по фронту» пьесăна выляса панипе уçрĕ.

Театрăн чăваш труппинче кăçал пултаруллă артистсем нумай. «Приказ по фронту» пьесăра Серго Орджоникидзе рольне Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов юлташ пысăк пултарулăхпа вылять. РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Алексеев юлташ та пьесăра Николаев рольне пысăк мастерлăхпа вылярĕ. Çамрăк ача Павлик ролĕ пьеса пуçламăшĕнчен вĕçне çитиех куракансен кăмăлне çĕклентерет. М. Иванова Павлик ролĕнче çыпăçуллă вылять.

Анчах та театр сезона уçма çителĕксĕр хатĕрленнĕ. Ку вăл сезон вăхăтра уçăлманнинче те, труппăсене ĕçлеме лайăх майсем туса паманнинче те курăнать. Сценăсен декорацийĕ начартарах.

Театр администрацийĕ пьесăсен программине туман, пьесăра кам выляннине курса вуламалла çĕре çырса çапман. Юлашкинчен çакна та палла тăвас пулать: спектакль кăтартнă вăхăтран чылай кая юлса пуçланчĕ. Çакă ĕнтĕ малаллахи постановкăсенче театр коллективĕн дисциплинине çирĕплетме кирлине кăтартать.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Сталинградăн хĕррисенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Тăшманăн позицийĕсем пирĕн Н-ски чаçăн командăнăй пунктĕнчен пĕр 800 метрта кăна тăраççĕ: кунта канлĕ сехетсем пулмаççĕ. Минăсемпе снарядсем çурăла-çурăла каяççĕ; тăшманăн самолечĕсем вĕçе-вĕçе килеççĕ, чĕрĕ япалана пурне те переççĕ.

Хаяр атакăсен кунĕ хыççăн çавăн пекех канăççăр çĕр килсе çитет. Анчах та тĕттĕм çĕрле Атăл урлă каçса Сталинграда, çапăçакан часть тăракан вырăна пĕрремĕш хут пырсан, канлĕ тăракан пулатăн. Бомбăсемпе минăсем çухăраççĕ пулин те, кунта, оборона линийĕнче, кашни хăйĕн ĕçне тăвать. Акă, повар хăйĕн кухни патĕнче лайăх хуçа пек тăрăшса ĕçлет. Лăпкă та вастра хĕрсем пăс кăларакан вĕри апата блиндажсем тăрăх питĕ час салатса тухаççĕ. Военторг магазинĕ ĕçлет. Боецран пуçласа командир таран кунта пурте çакна лайăх пĕлсе тăраççĕ: кунтан кайма юрамасть!

Çапăçусен центрĕ юлашки вăхăтра Сталинградран çурçĕр хĕвеланăç хĕррине куçрĕ. Унта тăшман кирек мĕнле жертвăсем тӳссе те пулин Атăл патне çитесшĕн. Пирĕн боецсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсен атакисене çав тери çирĕп тăрса сирсе яраççĕ. Хăшпĕр чухне пирĕн боецсемпе нимĕçсен фашистла войскисем хушшинче 10 метртан та ытла юлмасть. Чи йывăр условисенче икĕ уйăх ытла хаяррăн çапăçни пирĕн боецсене нумая вĕрентнĕ, вĕсене пиçĕхтернĕ, вĕсене тата çирĕпрех, тата вăйлăрах çапăçакан тунă. Çапăçу кашни çуртшăн, кашни чулшăн пырать.

Красноармеец Иван Бахтин нимĕçсемпе 15 уйăх ĕнтĕ вăрçать. Вăл çĕнтерӳ хаваслăхне те, поражени хуйхине те курнă. Пĕр хут çеç мар вăл сложнăй условисенче пулса тăнă, ăна пĕр хут çеç мар йывăр килнĕ, анчах çирĕплĕхпе тимлĕх тата шанăçлăхпа тавçарулăх ăна ялан пулăшнă. Иван Бахтин вăл ĕлĕк тракторист пулнă, халĕ вăл пулеметчик. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах вăл хăйĕн ручной пулеметне—шанчăклă тусĕпе помощникне—пăрахмасть. Сталинградшăн çапăçса кăна Бахтин 126 нимĕçе вĕлерсе тăкнă.

Пирĕн боецсем Сталинград урамĕсенче çапăçни халăх пурăнакан пунктсенчен аякра çапăçнинчен нумай енĕпе урăхла. Урамра çапăçнă вăхăтра хăшпĕр чухне тăшман ăçтине, унăн вăйне тата вăл мĕнле хĕçпăшалланнине пĕлме йывăр пулать. Унта тылпа фронт çук. Кашни çурт—рубеж. Кашни чул хыçĕнче—огневой позици.

Пĕрре танкистсем Иван Бахтина пĕр урамра нимĕçсен огневой точкисене тупма ыйтнă. Хăйпе пĕрле Черных красноармееца илсе кайса, Бахтин çав урама пырса тухнă. Иккĕшĕ те вĕсем канализаци люкне кĕрсе ларнă та кĕтсе выртнă. Çав люкран нимĕçсем пĕр çул патĕнчен теприн патне чупса куçни курăннă. Черных красноармеец, кĕтсе тăма пĕлменскер, фрицсем чупса куçнине сăнаса выртса, Бахтина пĕрмаях васкатнă.

— Мĕн пăхатăн ара, авă, нимĕçсем!

— Ан васка, ку фашистсем ытти сене илĕртекеннисем пулччăр. Хăюланса çитсен, нимĕçсем ушкăнăн та тухĕç!

Бахтин йăнăшман. Пăртак тăрсан, вуншар нимĕç пĕр çуртăн хапхи патне пухăнса тăнă. Çав вăхăтра вара ручной пулемет ĕçлеме тытăннă та. Темиçе черет персе ярса, фашистсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкнă.

Çуртсенче ларакан нимĕçсем вара чӳречесемпе чердаксенчен урам тăрăх переме тытăннă. Иван Бахтин çакна кĕтсе тăнă та. Вăл противникăн огневой точкисен вырăнĕсене пĕлнĕ те ун çинчен пирĕн танкистсене пĕлтернĕ. Пырса çитнĕ танксем вара хăйсен снарячĕсемпе нимĕçсен огневой позицийĕсене пĕтерсе тăкнă.

Н. МАРКОВСКИЙ.

Пирĕн землякcем

Пĕр ял çыннисем

Отечественнăй вăрçăра гвардин старши серганчĕ Иван Крылов тата зенитчик Аркадий Козлов уйрăмăнах чапа тухрĕç. Вĕсем Мăн Явăшсем (Советски район).

* * *

Иван Андреевич Крыловăн Хĕрлĕ Çара каяччěнхи биографийĕ нимĕнле пысăк ĕçсемпе те палăрса тăмасть. Вăл 1902 çулта çуралнă, ялхуçалăх ĕçĕнче ĕçлесе пурăннă. Фронта кăçал кайнă. Вăл фронтра тăшмана çав тери курайми пулса çитнĕ.

Фронта каиччен Крылов юлташ нихăçан та çарта пулман. Çавăнпа та унăн хĕçпăшалсене тата çарти йĕркене вĕренсе çитес тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле пулнă. Вăл тăрăшса вĕреннĕ. Вăл гвардеец пулса тăнă.

Унăн «текущи счечĕ» çинче нимĕçсен вĕлернĕ салтакĕсем вуншарăн шутланаççĕ. Пирĕн ирĕклĕ халăха чура тума килсе кĕнĕ нимĕçсене тĕппипех пĕтерсе тăкма ăна çĕршыв чаплă хĕçпăшал шанса панă. Çивĕч куçĕсемпе тĕл персе, штыкпа чиксе, вăл нимĕçсен речĕсене сайралатать.

Н. ялĕшĕн çапăçу хаяррăн пынă. Вăл пĕр кун ытла тăсăлнă. Тăшман яла тытса илме васканă, вăл урнăçемĕн урса пынă. Вĕçĕмсĕрех пуля шăхăрнă, снарядсем çурăла-çурăла ӳкнĕ, нихăçан лăпланма пĕлмен çил-тăвăл тухнă пек туйăннă. Крылов та юлташĕсемпе пĕрле пăшалпа персе тăшмана çул памасăр тăнă.

Акă, кĕçех Крылов патнелле вунă нимĕç пыраççĕ. Вăл бандитсене курать те тарăхса каять, чĕри хыттăн тапма пуçлать, вăй-халне пухать. «Кусене пĕтермесен ĕç тухмасть»,—шутласа илет вăл хăйĕн ăшĕнче.

Крылов винтовкăпа тĕл перет. Нимĕçсен пĕр пайне пĕтерсе тăкать. Анчах та чĕрĕ юлнисем ун патнеллех пыраççĕ. Вунă хутчен персе, Крылов хăйĕн патнелле пыракан нимĕçсене пурне те вĕлерсе тăкать.

Крылов юлташ малти позицисенче çапăçать. Пĕрре кăна мар вăл вилĕм умĕнче тăнă, анчах та тăшманран хăраса ӳкмен. «Пире çĕршыв хурçăран тунă. Урнă йытăсем пире нихăçан та çĕмĕрейрес çук. Вĕсене хăйсене пĕтерсе тăкатпăр. Виçшер аршăн çĕр тата пĕрер пуля хĕрхенмĕпĕр вĕсемшĕн»,—тесе çырать вăл тăван ялĕнчи колхозниксем патне.

Унăн ĕçĕсене пысăк хак панă. Вăл—гвардин старши серганчĕ. Çапăçура хастарлăх кăтартнăшăн Крылов юлташа «За боевые заслуги» медаль тата «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ парса наградăланă.

* * *

Аркадий Прохорович Козлов Октябрьти революци пулнă хыççăн çеç çуралнă. Унăн ашшĕ те тăван çĕре тăшмансенчен хӳтĕленĕ. Аркадин пурнăçĕ — социализмлă совет çĕршывĕнчи пиншер çамрăксен пурнăçĕ пекех.

Вăл ялти çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă. Шкулта лайăх вĕреннĕ. Ăна, лăпкăскере тата ĕçе юратса тăваканскере, ялти çынсем пурте пĕлеççĕ. Козлов юлташ обществăлла ĕçсенче хăйĕн талантне кăтартнă. Вăл ялсовет секретарĕ пулса ĕçленĕ.

1939 çулта вăл Хĕрлĕ Çара кайнă. Бессарабири тата Çурçĕр Буковинăри халăхсене ирĕке кăларнă çĕрте пулнă. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене, пирĕн мирлĕ пурнăçа пăсаканскерсене, хирĕç çапăçать.

Халĕ Козлов юлташ зенитчик. Хăйĕн хĕçпăшалĕпе персе вăл нимĕçсен самолечĕсене пĕтерсе тăкать. Вăл питĕ тĕл перет. Фашист çăханне персе ӳкерсен, юлташĕсем ăна:

— Эсĕ пултаратăн. Вĕсене çавăн пек пĕтермелле те, — тенĕ.

Зенитчиксем унпа час-часах калаçнă. 23 çулхи зенитчик вĕсемшĕн пример пулса тăнă.

Вăл анлă фронт урлă пирĕн тыла сиен тума вĕçсе килекен фашистла çăхансен çулне пӳлет. Хăюллă земляк хăйĕн çутă малашлăхĕшĕн, амăшĕн телейĕшĕн, тăванĕсемшĕн кĕрешет. Нумаях пулмасть вăл амăшĕ патне çапла çырчĕ: «Эпĕ халĕ те сывах, нимĕç кайăкĕсене тытатпăр. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн мана «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăларĕç».

Хăюллă землякcемпе мухтанса, колхозлă ял вĕсене ырă сунса саламлать, тăшмана хирĕç малалла та паттăррăн кĕрешме вăй-хал сунать

Яков СИГАЛ, Ник. ПАХОМОВ.

Колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура

ИЕПРЕÇ. Районри колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Малта пыракан колхозсем Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă куна ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе çитернипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Паянхи куна районри 33 колхозра кĕлтесене пĕтĕмĕшпех капана хывса лартнă. Халĕ пур колхозсенче те авăн çапас ĕç хĕрӳллĕн пырать. «Правда», «Тымар», Киров ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхипе çурхи пучахлă тырăсене çапса пĕтерчĕç. Çак колхозсенче халĕ пăрçа, ясмăк, кантăр çапаççĕ. Çĕрулми кăларас тĕлĕшпе те колхозсем аван ĕçлеççĕ. Районри 48 колхозран 41 колхозра çĕрулмине пĕтĕмĕшпех кăларса пĕтернĕ. Çĕрулмине кăларса пынă вăхăтрах колхозсем ăна государствăна леçсе, плана срокчен тултарма тăрăшаççĕ. «Красный фронтовик», «Молния» тата ытти колхозсем государствăна çĕрулми парса татрĕç.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе çитерес тĕлĕшпе «Красный фронтовик», «Правда», «Коминтерн» колхозсем малта пыраççĕ. «Красный фронтовик» колхоз (унăн председателĕ коммунист М. Марков) государствăна тырă тăратас, МТС ĕçĕшĕн натуроплата тырри парас плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕ. Çавăн пекех государствăна çĕрулми, пахча-çимĕçсем парса татрĕ. Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тума 100 центнер ытла тĕштырă панă. Колхозниксем уйхир ĕçĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Максим Белов колхозник çĕрулми кăларнă çĕрте сухапуçпе кунне 0,60 гектар сухалас вырăнне 1,20—1,50 гектар сухаласа пынă. Колхозниксем тăрăшса ĕçленипе çĕрулмине сентябрĕн 30-мĕшĕнче кăларса пĕтернĕ.

«Правда» колхоз (председателĕ коммунист К. Карпов) тырă вырма тухнă хыççăн пилĕк кунранах авăн çапма тытăнса, кĕрхипе çурхи пучахлă тырăсене октябрĕн 2-мĕшĕнче çапса пĕтернĕ. Тырра малтан комбайнпа, унтан «ПДО-34» маркăллă молотилкăпа çапнă. Комбайнер Громов юлташ сменăра 12 тонна тырă çапас вырăнне 15—16-шар тонна çапса пынă. Колхозăн тата 10 гектар çинчи пăрçана, 7 гектар çинчи ясмăка çапмалла. Кăна та октябрĕн 10-мĕшĕччен çапса пĕтереççĕ. Колхоз çĕрулмипе пахча-çимĕçсене те вăхăтра пухса кĕртнĕ. Малтан кăларнă çĕрулмине государствăна 75 центнер леçсе панă. Ытти пахча-çимĕçсене те парса татнă. Государствăна тырă памалли обязательствăна тултарнă.

«Правда» колхоз Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн Буденный ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. Анчах та Буденный ячĕпе тăракан колхоз ăмăртура «Правда» колхозран чылай кая юлса пыратьха. Буденный ячĕпе тăракан колхоз кĕлтесене капана хывса лартнă пулсан та 55,8 процентне çеç çапнă. Кĕрхи çĕртме тума тытăнман, натуроплата тырри парассине 60 процент çеç пурнăçланă. Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне памалли тырра парса татман. Çĕрулми пама тытăнман.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес, фермăсем валли выльăхсем пухас тĕлĕшпе те кĕрешӳ сарăлсах пырать. «Осоавиахим» колхоз октябрĕн 1-мĕш тĕлне выльăх витисене пурне те юсаса, ăшăтса хатĕрленĕ. «Победа» колхоз та çак кунсенче çĕнĕрен 40 пуç çамрăк пăру туяннă, выльăх ĕрчетмелли государство планне 105 процент тултарнă. Кунсăр пуçне сурăх ферми валли 60 пуç сурăх туяннă. «Путиловка», «Строитель», Димитров ячĕпе тăракан колхозсем те государство планне пур выльăхсем енĕпе те тултарчĕç. Халĕ колхозсенче выльăх витисене хĕле валли юсаса хатĕрлес ĕçсем хĕрӳллĕн пыраççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ăмăртса ĕçлекен колхозсенче

ТАВАЙ. Хучелти Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн, хăйсен ĕçри хастарлăхне темиçе хут вăйлатрĕç тата ĕç тухăçлăхне хăпартрĕç. Вĕсем хăйсен мĕнпур пултарулăхне, мĕнпур вăйне фронта пулăшас çĕре параççĕ. Колхоз уйри мĕнпур тырпулсене кĕске срокра та пысăк пахалăхпа капана хыврĕ, кĕракине вăхăтра вĕçлерĕ, авăн çапас ĕçе 90 процент ытла пурнăçларĕ, çĕр улмине кăларса пĕтерчĕ. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче кĕрхи çĕртме тăвас плана ирттерсе тултарнă. Виçĕ гектар çинчи кантăра татса пĕтерчĕ. Халĕ 1942 çулшăн государствăна тырă, пахча-çимĕçсем, çĕрулми, аш-какай, сĕт, çăмарта, укçа-тенкĕ парса татнă.

Тĕмерти Смидович ячĕпе тăракан колхоз та уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн хăйĕн ĕçне чылай вăйлатрĕ. Кĕлтесене пĕтĕмпех капана хыврĕ, çĕрулмине кăларса пĕтерчĕ, 39 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера пухса кĕртрĕ. Çурхи тырăсенчен 95 процентне çапса амбарсене кĕртнĕ. Паян авăн çапас ĕç вĕçленет.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Республикăри колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн пурнăçласа пынине пула колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен йышне чылай ӳстерчĕ. Сентябрĕн 30-мĕшне выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Ферма çуртсене пурне те юсанă, выльăхсем валли апатсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Пурĕ 210 тонна силос хывнă. Çак кунсенче фермăра ĕçлекенсем хăйсен вăйĕпе 30 тонна пахча-çимĕçсем хумалăх нӳхреп тата 16 сысна ами валли çĕнĕ вите туса пĕтерчĕç. Фермăра ĕçлекенсем: М. Скворцова (ферма заведующийĕ), С. Шумов, С. Кислов, И. Шумова, К. Андреева, А. Зайцева юлташсем хăйсепе шанса панă ĕçе тĕплĕн туса пыраççĕ, выльăхчĕрлĕхсемшĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Доярка Ирина Шумова сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 10.080 литр сĕт суса илсе çулталăк планне тултарчĕ. Доярка Евдокия Кудряшова та сĕт суса илмелли çулталăк планне çак кунсенчех тултарать.

Колхоз государство умĕнче аш-какай, сĕт-çу парас енĕпе парăмлă мар. Ĕçе тĕрĕс организацилениине пула колхозра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç те начар мар пырать. Халĕ мĕнпурĕ 132,98 гектар сухаланă. Нумай колхозниксем нормăран ирттерсе сухалаççĕ.

Лачкассинчи «Çăлтăр», Чӳтейри «Хурçă», Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозсем те ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерчĕç. «Çăлтăр» колхозра уйрăмăнах 4-мĕш бригада (бригадирĕ Е. Димитриева юлташ) вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçленине палăртмалла. Ку бригада пур ĕçе те вăхăтра туса пырать, кая юлса пыракан бригадăсене пулăшать. Çак кунсенче кая юлса пыракан бригадăсене пĕр гектар çинчен çĕрулми кăларса тата 10 гектар çинчен кĕлте кĕртсе пачĕ. Бригадăри колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр, фронтри пек ĕçлеççĕ. 64 çулхи Иван Каринкин 65—70 лав кĕлтене капана хывнă. Капан тăвас ĕçре Николай Ласточкин та нормăна 230—240 процент тултарса пычĕ. Колхозниксем государствăна тырă тăратассине срокчен пурнăçлассишĕн тăрăшаççĕ. Комсомолка Мария Семенова хатĕрлев пунктне пурĕ 24 хутчен тырă леçнĕ.

Йантăрч ялсоветне кĕрекен «Çулăм» тата «Çĕнĕ çул» колхозсем юлашки кунсенче авăн çапас, государствăна тырă парас тата техникăллă культурăсене пухса кĕртес ĕçсене чылай вăйлатрĕç. Икĕ колхозĕ те халĕ выльăхчĕрлĕхсем ĕрчетмелли плана тултарнă, çĕрулми кăларса пĕтерсе государствăна парса татнă.

Ялсовет виççĕмĕш кварталти финанс планне 158 процент тултарса çитернĕ. Октябрь уявне 4-мĕш кварталти финанс планне ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

В. ИЛЬИН.

Бригада тăрăшса ĕçлет

КАЛИНИНО. Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра махорка туса илес тĕлĕшпе уйрăм бригада ĕçлет. Çак бригада кăçал 10 гектар çинчен пысăк тухăçлă махорка туса илчĕ. Махорка туса илес тĕлĕшпе колхозниксем кăçал уйрăмăнах тăрăшса ĕçлерĕç.

58 çулхи Анна Леонтьева махорка туса илес ăсталăха лайăх вĕренсе çитнĕ. Вăл бригадăри стахановецсенчен пĕри пулса тăрать. Кăçал вăл 171 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕ. Çавăн пекех ватă колхозница А. Снитина, 15 çулхи хĕрача Е. Прохорова юлташсем те чылай ĕçкунĕ турĕç.

Колхозра комсомолец П. Языков юлташ ертсе пыракан бригадăри колхозниксем те лайăх ĕçлеççĕ. Бригада çĕрулми кăларса пĕтерни чылай пулать ĕнтĕ. Çĕрулми кăларнă çĕрте Т. Степанова, И. Сорокина, А. Федорова ик-виçĕ норма тултарса ĕçленĕ. Халĕ вĕсем авăн çапнă çĕрте те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

И. ФЕДИНКИН.

Шкул ачисен ĕçкунĕсем

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Нăрваш Шăхалĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасемпе пионерсем çуллахи каникул вăхăтĕнче «Восход», «Совет» тата «Осоавиахим» колхозсен уйхирĕсенче ĕçлерĕç. Шкул ачисене ĕçре учительсем ертсе пынă. Вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле ачасемпе учительсем мĕнпурĕ 4.000 ытла ĕçкунĕ тунă. И. Корчагин тата Н. Калашников учительсем 100 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ. Вĕренекен ачасем 2 центнер пучах пуçтарнă. Халĕ вĕсем çĕрулми кăларнă çĕрте тăрăшса ĕçлеççĕ.

И. МИТРОФАНОВ.

* * *

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозри пионерсемпе шкул ачисем колхоз производствинче активлăн ĕçлерĕç. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) постановленийĕ тăрăх, 12 çултан пуçласа 16 çула çитнĕ çамрăксен 50 ĕçкунĕнчен кая мар тумалла. Г. Макарова, К. Игнатьева, Ил. Филиппов, А. Михайлова, Ар. Шорников пионерсем кашниех 80—90-шар ĕçкунĕ туса, хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи обязанноçне чыслăн пурнăçларĕç.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

И. В. Сталин юлташ Америка корреспондентне панă ответсем çинчен Америка пичечĕ мĕн çырать

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем И. В. Сталин юлташ Ассошиэйтед пресс корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине панă ответсем çинчен нумай çыраççĕ. «Нью-Иорк таймс» хаçатра пичетленĕ статьяра çапла каланă: «Англипе Америка халăхĕ иккĕмĕш фронта уçас тĕлĕшпе хăйсен пуçлăхĕсенчен ытларах тăрăшаççĕ, тесе шутлать пулмалла Сталин, вăл çавăнпа хăйĕн çырăвне çырнă пулмалла».

«Вырăссем,—тесе çырать «Нью-Иорк геральд трибюн» хаçат,—хăйсен шухăшне яланах уççăн каласа параççĕ. Фактсем уçăмлă пулĕ. Сталин союзниксен пулăшăвне, хĕвеланăçĕнче сывлăшран тапăнса бомбăсем пăрахнине те шута илсе, çителĕксĕр тесе шутлать, иккĕмĕш фронт ыйтăвне чи пысăк ыйту тесе хаклать. Англипе Америкăри халăхсем нумайĕшĕ кун пирки иккĕленмеççĕ. Уилки тĕрĕс каланă, рядовой гражданин халех кĕрешĕве кĕме хатĕр. Халăх хĕсни иккĕмĕш фронта уçас вăхăта татса пама пултараймасть. Анчах халăх хăй хăвăртрах ĕçе тытăнасса кĕтнине уççăн каласа пама пултарать. Çакна уççăнах кăтартса панă пулсан, пуçлăхсем чи çывăх вăхăтрах кирлĕ мерăсем йышăнасса шанма пулать».

«Сталин,—тесе çырать «Вашингтон пост» хаçат,—Российăна питех те парăнса ĕçлет, çавăнпа та вăл вырăссем Германин çĕр çинчи тата сывлăшри вăйĕсем тапăннин пĕтĕм йывăрлăхне хăйсен çурăмĕ çинче тӳссе ирттернĕ вăхăтра чĕнмесĕр тăма пултараймасть. Кашни вырăс çынни англичансемпе американецсене йывăрлăхăн пĕр пайне хăйсем çине илме чĕнет». Сталин сăмахĕсем çине Америка халăхĕпе США правительстви кăмăллăн ответлĕç, тесе хаçат шанса тăнине пĕлтерет. Совет Союзне хӳтĕлес ыйту пĕр вырăссен проблеми кăна пулса тăрать тесе хаклакан хăшпĕр ушкăнсене хаçат критиклет. «Хăйсене хăйсем хӳтĕлесе, тесе çырать хаçат, вырăссем Пĕрлешӳллĕ Штатсене пысăк пулăшу параççĕ». Малалла хаçат çапла çырать: «Сталинграда паттăррăн хӳтĕлекенсен ĕçĕнчен тĕлĕнни сахал. Вырăссене пулăшу кирлĕ. Сталин англичансемпе американецсем хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртмеççĕ тесе калать пулмалла. Совет Союзне вăйлăнрах пулăшни вăрçă пырас вăхăта чылай чакарать».

И. В. Сталин юлташ Америка корреспондентне панă ответсем çинчен Австрали пичечĕ мĕн çырать

СИДНЕЙ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ Ассошиэйтед пресс корреспондентне панă ответсене Австралири хаçатсем паллă вырăнсенче пичетлесе кăларнă. «Дейли телеграф» хаçать, Сталинăн «тӳрĕ заявленинчен» хăшпĕр вырăнсене илсе, çапла çырать: «Сталин вырăссем пурте тата нумай англичансемпе американецсем шутланине каласа парать. Вырăссем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешмен пулсан, çапла вара гитлерла Германие Англи çине тапăнма чарса тăман пулсан, Англи лару-тăрăвĕ питех те начар пулнă пулĕччĕ, çакна нумай çынсем ăнланаççĕ. Наступлениллĕ вăрçă оборонăн пĕртен-пĕр шанчăклă меточĕ пулса тăнине вырăссем ĕçпе кăтартса пачĕç».

ССР Союзĕнчен пĕлтернисене Анатоли агентстви пăсса кăларни

АНКАРА, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Анатоли агентстви хăйĕн Турцири хаçатсене ярса паракан информацийĕнче Сталин юлташ «Ассошиэйтед пресс» корреспондентне панă виçĕ ответран иккĕшне çеç пичетленĕ. Корреспондент Совет Союзĕнчи халăх хальхи вăхăтра иккĕмĕш фронта мĕнле хаклани çинчен панă ыйтăва Сталин юлташ панă ответа Анатоли агентстви сиктерсе хăварнă.

Анатоли агентстви ССР Союзĕн пĕлтерĕвĕсене пĕрре çеç мар çакăн пек пăсса пĕлтернине вырăнти журналистсен ушкăнĕсем каллех курса ĕнентĕç.

Çапла, сăмахран, Совет Информаци Бюровĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фрончĕсенчи икĕ уйăх (çак çулти майăн 15-мĕшпе июлĕн 15-мĕшĕ) хушшинчи ĕçсене пĕлтернине те урăхлатнă. Çак фронтра нимĕçсем аманнисене, тыткăна лекнисене, вилнисене пĕрле шутласан 900.000 салтакпа офицер çухатнă тесе Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернине Анатоли агентстви «нимĕçсем 9000 салтак çухатнă» тесе пĕлтернĕ. Совет Информаци Бюровĕ Германипе Совет Союзĕ хушшинчи фронтра виçĕ уйăх хушшинчи (çак çулти майăн 15-мĕшĕпе августăн 15-мĕшĕ хушшинчи) ĕçсем çинчен Совет Информаци бюровĕ пĕлтернине те Анатоли агентстви хăйне кирлĕ пек урăхлатнă: Совет Информаци Бюровĕ Совет Союзĕн аманнисемпе вилнисем 606.000 çынна çити пулчĕç тени вырăнне, Анатоли агентстви 1.606.000 çын пĕтнĕ тесе çырать.

Журналистсем Анатоли агентстви тунă «йăнăшсене» татах та астутараççĕ: пĕррехинче Германин верховнăй командованийĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă çинчен мухтанчăкла пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре каланă тăрăх, нимĕçсен пĕр саперăнăй батальонĕ «10.000 мина пĕтерсе тăкнă» пулать. Анатоли агентстви ăна пачах урăхла туса хурса, «нимĕçсен батальонĕ 10.000 салтак вĕлерсе пĕтернĕ», тесе пĕлтерет. «Улус» хаçат вара çак предложение хаçат валли заголовок тăвать.

Гитлеровецсен Голландири вăрă-хурахла ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Голландире вăрттăн тухса тăракан патриотизмла хаçатсене Лондонра чылай илнĕ. Çав хаçатсенче Голланди çĕршывĕнче гитлеровецсем массăллăн çаратса вăрă-хурахла ĕçсем тунине кăтартакан нумай фактсем çырса кăларнă. Çав хаçатсенчен пĕринче пĕлтернĕ тăрăх, 6 уйăх хушшинче Германие Голландирен 300 миллион çăмарта, 63.000 тонна утă тата вăрлăхлăх çĕрулми нумай янă.

Нумаях пулмасть, патриотсем чугун çул çинче пулеметсем тултарса лартнă пĕр вагона пĕтĕмпех вăрласа пĕтернĕ. Çар пурлăхне тиенĕ поезд Роттердам хулине çитсе пынă чухне çеç фашистсен куçĕсем уçăлнă, вĕсем ун чухне тин туп-тулли пулемет тиесе тултарнă хыçалти вагон пушшăнах хăлтăртаттарса пынине курнă.

Лаваль Германи валли рабочисем пухас майпа пуçласа янă кампани пăчланса ларнă

ЖЕНЕВА, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Франци правительстви темĕн тĕрлĕ тăрăшнă пулин те, Францире Германи промышленноçĕ валли рабочисем пухас тĕлĕшпе пуçласа янă юлашки кампани пăчланса ларнă. Лаваль Гитлера кĕске вăхăт хушшинчех 100.000 рабочи тупса пама пулнă. Анчах та августăн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм Францийĕпе те аран-аран 17.000 рабочи пуçтарса çитернĕ. Францири рабочисем çав кампанине тĕллевне хăйне тивĕçлĕ пек хак панă, Лаваль вербовщикĕсен суя сăмахĕсене лайăх ăнланса илнĕ. Гитлера сутăннă агентсем темĕн чухлĕ тăрăшсан та, рабочисем вĕсене хирĕç массăллă бойкот тăваççĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

УПРАВЛЕНИЕ АВТОТРАНСПОРТА ПРИ СНК ЧУВАШСКОЙ АССР

объявляет набор учащихся на дневные и вечерние курсы шоферов и автослесарей в г. г. Канаше и Чебоксарах. Срок обучения на курсах шоферов с отрывом от производства 45 дней, а без отрыва от производства—3 месяца.

На курсы шоферов принимаются мужчины и женщины в возрасте не моложе 17 лет и 6 месяцев, а на курсы автослесарей от 14 лет и старше, имеющие образование не ниже 4 классов.

Зачисленные на курсы шоферов с отрывом от производства обеспечиваются стипендией от 80 руб. до 120 руб, а иногородние, кроме того, квартирными—30 руб. в месяц.

Заявление с заверенными копиями документов об образовании, рождении, автобиографией, с 4-мя фотокарточками и почтовыми марками на 60 коп. направлять: желающим обучаться в г. Чебоксарах в Управление автотранспорта: ул. Союзная, дом № 4, а в гор. Канаше—в Канашскую автошколу.

УПРАВЛЕНИЕ АВТОТРАНСПОРТА ПРИ СНК ЧАССР

2—2

ЧЕБОКСАРСКОЙ БОЛЬНИЦЕ требуются: сестра, хозяйка по белью и шофер.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники-технологи по холодной обработке металла, снабженческие и складские работники, бухгалтеры и машинистки, мастер по камен. и штукатурн. работам, строит. десятник, коменданты общежитий.

Квалифицированные рабочие: токари, фрезеровщики, револьверщики, строгальщики, автоматчики, шлифовщики, слесари, электро-монтеры, штамповщики, установщики штампов, электро-сварщики, резчики, прессовщики, лаковары, литейщики, модельщики, шорники-смазчики, маляры, каменщики, печники, штукатуры, плотники, столяры, упаковщики-плотники, подсобные рабочие, грузчики, свинари, уборщицы, дворники, сторожа, шофера, автослесари, такелажники, жестянщики.

Требуются вахтеры и пожарные работники.

Принимаются переквалификанты (ученики от 16 лет) по указанным специальностям.

Обращаться: улица Карла Маркса, 80, бюро пропусков, от 11 до 3 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1333 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.